*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮНКУН

89 (2501) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
ноябрь/чӳк 19

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Тăвата çул кĕтнĕ хыççăн

**Тӳсĕмлĕ çав ял çынни. Хăйĕн вăйĕпе çурт хăпартнă чухне мĕн чухлĕ тертленет пулĕ. Ăна туса пĕтерсен, пурăнма кусас тенĕ вăхăтра та, нуши хыçранах çӳрет. Ĕмĕтленнĕ çурта кусасси темех мар, анчах паянхи ăру çутăсăр пурăнма хăнăхман-çке. Çĕнĕ урамра электричество çутине кĕтсе тепĕр чухне темиçе уйăх выrăнне виçĕ-тăватă çул та иртет. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Карапашсене аса илсен тĕлĕнетĕн: вун-вун çул кĕтме те чăтăмлăх çитерет çын хăйĕн çĕнĕ çуртне йĕркеллĕ электричество çути çитессе. Йывăр тапхăр пулнă та иртнĕ. Турра шĕкĕр, халĕ эпĕ асăннă ялти çĕнĕ урамра лару-тăру ку енпе чиперех.**



Якутарсем текех çутăсăр нушаланмĕç.

Сăнӳкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Çĕнĕ урамсене электрификацилемелли программа республикăра 2010 çулта пурнăçланма тытăннă. Çав çулхине ун чухнехи Промышленноçпа энергетика министерстви 223 объекта (урамсене) çутăпа тивĕçтерме хатĕрлес тĕлĕшпе подряд организацийĕсемпе 63 килĕшӳ тунине палăртрĕ строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕр министрĕн çумĕ Сергей Аркадьевич Безруков. Патшалăх килĕшĕвĕсен калăпăшĕ пĕтĕмпе 321,7 млн тенке çитет. Анчах алла укçа илсен хăш-пĕр организаци хăйĕн тивĕçне вĕçне çитиччен пурнăçлама васкаман. Çакăн çинчен министр çумĕ республикăри журналистсене çавнашкаллисен аллине лекнĕ объектсемпе паллаштариччен каласа кăтартрĕ.

Пĕри йĕркеллĕ ĕçлемесен теприне шанса пама пулмасть-ши тетĕр-и? Пулать, анчах пурнăç йăлтах саккуна пăхăнса, тĕрĕсрех каласан, суд урлă тума ыйтать. Суд ĕçĕ, хăвăрах пĕлетĕр, хăвăрт пулмасть. Çавăнпа вăхăт тăсăлать. Ял çынни, паллах, тарăхать.

Сергей Аркадьевич асăннă тăрăх – "Степ", "СтройГранд-Сити", "Сатурн-Строй" пĕрлешӳсем япăх ĕçлекен организацисен йышне (реестрне) лекнĕ.

Иртнĕ эрне вĕçĕ тĕлне çак организацисен айăпĕпе республикăра 6 объекта çутă вăхăтра илсе çитерейме. Паян вĕсенче, паллах, урăх подрядчиксем тăрăшаççĕ. Ĕç пырать. Темле йывăр пулсан та ăна вĕсем çĕнĕ çулччен вĕçлеççĕ. Апла Муркаш районĕнчи Вăрманкасси ял тăрăхĕнче (кунти пĕр объектра трансформатор подстанцийĕ вырнаçтарман), Канаш районĕнчи Асхвара, Муллаварта тата Энтриялĕнче, Хĕрлĕ Чутай салинче тата çак районти Атнарта пурăнакансем Çĕнĕ çул уявне çĕнĕ çуртра тата нушалантармасăр савăнтаракан электричество çутипех кĕтсе илĕç.

Шупашкар районĕнчи Якутар ялĕн (Çĕньял ял тăрăхĕ) çыннисен кил-çуртне тăватă çул кĕтнĕ çутă кăçалхи юпа уйăхĕнче аран çитнĕ. Хăйсем мĕнле нушаланнине вĕсем пĕр-пĕрне пӳлсе каласа кăтартма хатĕр. Çук, пач çутăсăр ларман çав тапхăрта, анчах паян-ыран тӳнсе каясла ларакан свет юписем мĕн чухлĕ шиклентермен пулĕ "Садовая" урамра пурăнакансене. Иртсе пыракан пĕчĕк ача çине ӳксе инкек кăтартасран Турăран та пулăшу ыйтнă пулĕ хăшĕ-пĕри. Малтанхи юпасене çак урам çыннисем 20 çул каялла укçа пуçтарса хăйсен вăйĕпех лартнăмĕн. Ял администрацийĕн пуçлăхĕ Евгений Зубков ăнлантарнă тăрăх – Якутар пысăк ял мар. Малтан унта 22 çурт пулнă. 1990 çулсенче халăха çĕр валеçме тытăнсан кунта тата 58 çын çурт лартма кăмăл тунă. 20 çул хушшинче çутă юписем, паллах, кивелнĕ. Электричество вăйĕ çитсе пыманран çынсем пайтах нушаланнă. Çутă пралукĕ татăлсан хăйсем сыпа-сыпа тертленнĕрен вырăнти пуçлăха мĕн чухлĕ вăрçман-ши?

Урама çутăпа тивĕçтерме аукцион выляса илнĕ "Степ" организаци мĕншĕн япăх ĕçлени паллă мар. 2009 çултанпа вăл Якутарсене кирлĕ пек пулăшайман. Унпа тунă килĕшĕве пăрахăçланă хыççăн килни вара кĕске тапхăртах ĕçе вĕçленĕ. Ĕçе пурнăçлама республика хыснинчен 1300 пин тенке яхăн укçа уйăрнă.

Канаш районĕнчи Муллаварти икĕ çĕнĕ урамра пурăнакансем те "Сатурн-Строй" подряд организацийĕн явапсăрлăхне пула электричество çутине 4 çул кĕтеççĕ. Ял хула çывăхĕнче вырнаçнăран нумайăшĕ кунта çурт лартма ĕмĕтленнĕ. 15 çуртран тăваттăшĕнче çынсем хальччен пурăнкаланă темелле. Çутăна юнашар урамри çуртсенчен илсе тăнă. Урăх ниçта та пурăнма май килменнисен ирĕксĕрех çапла тума тивнĕ. Паян кунта çĕнĕ организаци ĕçленине пĕлтерчĕ Хучел ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Леонид Иванов. "Энергосетьстрой РСП" пĕрлешӳ Муллаварсене электричество çути декабрь уйăхĕнче çитессе шантарать.

Мĕнех, пурнăç кăтартĕ. Республикипе илсен 2010 çултанпа кăçалхи октябрь уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле 217 объекта хута янă (вĕсенчен 26-шĕ – "МРСК Волги"-"Чувашэнерго" акционер обществин инвестици программипе), тепĕр 16 объектра палăртнă ĕçе вĕçленĕ, паян документсене кирлĕ пек хатĕрлесе çитерессипе тăрăшаççĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**

ПУРНĂÇ ТАППИ



В. Петрова сăнӳкерчĕкĕ

## «Аслă ăру пек тăрăшасчĕ»

Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕллĕ хуçалăх хăй вăхăтĕнче миллионер колхозсен йышне кĕнĕ. Унăн ячĕ таврара кĕрлесе çеç тăнă. Анчах пасар реформисен тапхăрĕнче хуçалăх вăй-халĕ самаях хавшанă. Пилĕк çул каялла ăна Валерий Падуев ертсе пыма тытăннă. Йывăр лав вырăнтан тапраннă ĕнтĕ.

Асăннă хуçалăх тыр-пул ӳстерет, выльăх-чĕрлĕх çитĕнтерет. Маларах вара çĕрулмипе те ĕçленĕ. Ятарлă техника, ĕçченсем çитменрен çĕрулми çитĕнтерессине пăрахăçланă. Паянхи кун тĕш тырă, куккурус, выльăх валли курăк акса илет.

Юлашки çулсенче çĕр ĕçченне çанталăк ура хума пуçларĕ. Кăçалхи шăрăха пăхмасăр Аслă Елчĕксем гектартан 25 центнер тĕш тырă пухса илнĕ (республикăра вăтам тухăç – гектартан 22 центнер). Паллах, тыр-пул сортне çулсерен улăштарни, минерал удобренийĕсемпе пĕлсе усă курни тухăçа ӳстерме пулăшнах. «Пӳлмесене тултартăмăр, выльăхчĕрлĕх валли çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр.

2-мĕш стр. ➔

### Укçа ытларах килтĕр

Чăваш Республикинчи Министрсен Кабинетне ертсе пыракан Иван Моторин федерацин Атăлçи округĕнче инвестици илĕртӳлĕхне лайăхлатассипе, пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе аталанма чăрмантаракан сăлтавсен шутне чакарассипе ĕçлекен комисси ларăвне хутшăннă. Йошкар-Ола хулинче иртнĕ мероприятие Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Атăлçи округĕнчи председателĕ Михаил Бабич ертсе пынă.

Унта Раççей Президенчĕ Атăлçи тăрăхĕнчи регионсенче инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерессипе, бизнеса аталантарма майсем йĕркелессипе панă хушусене мĕнле пурнăçланине сӳтсе явнă. Раççей субъекчĕсенче инвестици климачĕн наци рейтингне йĕркелемелли мелсене, пĕчĕк тата вăтам бизнеса ăнăçлă аталантаракансен тĕслĕхĕсемпе усă курас ыйтăва пăхса тухнă. Федерацин Атăлçи округĕнчи инвестици уполномоченнăйĕн кăçалхи ĕçĕн отчетне итленĕ.

### Пенза хресченĕсене паллаштарнă

Вăрнарти хутăш препаратсен "Август" фирминче Пенза облаçĕн делегацийĕ пулнă. Çак облаçри çĕр ĕçченĕсем Вăрнарсем туса кăларакан хими хутăшĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Мĕнлерех условисенче хатĕрлеççĕ вĕсене? "Август" фирмăн Пенза облаçĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ ертсе пынă делегаци Вăрнарта пахалăхлă продукци хатĕрленине пур енлĕн курса ĕненнĕ.

«ХЫПАР»
ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔН
КĂЛАРĂМĔСЕНЕ
2015 ÇУЛĂН I ÇУРРИ
ВАЛЛИ РАÇÇЕЙ ПОЧТИН
КАШНИ УЙРĂМĔНЧЕХ
ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ.
**«ХЫПАР» –
732 ТЕНКĔ ТЕ 66 ПУС.
«ХЫПАР – ШĂМАТКУН»
– 304 ТЕНКĔ ТЕ 08 ПУС.**
ÇАВĂН ПЕКЕХ ПИРĔН КĂЛАРĂМСЕНЕ «ЧĂВАШПИЧЕТ», «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТĂН КИОСКĔСЕНЧЕ, «ХЫПАР» РЕДАКЦИЙĔНЧЕ ТУЯНМА ТАТА ÇЫРĂНМА ПУЛАТЬ.

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 19.11 | 20.11 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^{0}C$ | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | –7<br>–3 | –5<br>–3 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 764 | 764 |

# Ĕçне кура тупăшĕ

**Хушма хуçалăхпа кăна пурăнма пулать-и хальхи вăхăтра? «Паллах!» – çирĕплетсех каларĕ Çĕрпӳ районĕнчи Ямашра пурăнакан Николай Миронов.**

**Ял вĕçĕнчи тăпăл-тăпăл пысăках мар çуртра пурăнать арçын. Ларса канма та вăхăт çук унăн. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, пахча... Пĕччен пурăннă май хăйне кăна шанать.**



## Хуçалăхра хĕрĕх сурăхпа вун виçĕ кушак

– Кăçал ĕнене сутса ятăм. Вунпĕр хут пăруларĕ, ватăлчĕ ĕнтĕ. Вăкăрпа пушмак пăру кăна хăвартăм. Унччен сыснасем та усранăччĕ, çуллă какай çиме юраманнипе тек тытмастăп. Вĕсемпе чăрмавлăрах, – паллаштарать хуçалăхĕпе Николай Анатольевич.

Пысăк картишĕнче тин пăрахса панă утта выльăхсем тăрăшсах çиеççĕ. Виçĕ сул каялла вите-сарайне тĕпрен çĕнетнĕ. «Йăлтах вĕçлеймен-ха, укçа-тенкĕпе вăйхал çитерейменрĕм, – терĕ вăл. – Çĕнĕ витере выльăхсене ирĕклĕрех, ытларах усрама май пур».

– Ĕне йышне ӳстерсе сĕт сутса пуясшăн ĕнтĕ эсир? – унăн шухăшне тĕшмĕртме хăтланатăп эпĕ.

– Пĕр ĕне те çителĕклĕ. Иртнĕ çулсенче сĕт пуçтаракансем ял çыннисене улталарĕç, укçасăр хăварчĕç. Çавăн хыççăн нумайăшĕ сĕт сутма пăрахрĕ, çав шутра эпĕ те. Унпа килтех усă куратăп. Сурăхсен йышне тата ӳстересшĕн.

– Тăватă сурăх пĕр ĕнепе танлашать тенĕ. Тата вăл апата тиркешсе çемçе утă кăна суйласа çиет. Хальхи вăхăтра унран пысăк тупăш илесси те иккĕлентерет.

– Сурăхсене пăхма çăмăлрах, апат ытлашши çимеççĕ, тиркешнине те курсах кайман. Манăн вĕсем 32 пуç ĕнтĕ. Çулла 40-е те çитнĕччĕ, сутса пĕтертĕм. Çитес çул 50 пуçа çитеретĕпех. Халĕ такисене çеç сутатăп, сурăхĕсене ĕрчетме хăваратăп. Кăçал сывлăхăм хавшанипе кĕтĕве ӳстереймерĕм, – хуравларĕ Миронов.

Çанталăк шăнтнă май сурăхсене пахчана кăларнă. Кĕр ăшă килнипе каю самай ӳсме ĕлкĕрнĕ. Юр хупласа лартиччен çимелĕх пур. Çăмламас сурăхсем хуçине асăрхасанах пуçĕсене çĕклесе сасă пачĕç. Çанталăк сасартăк сивĕтсе янипе çăмне касса ĕлкĕреймен-мĕн. «Юрать касман-ха, хĕл сивĕ килмелле тенине илтрĕм, капла сурăхсем шăнмаççĕ», – хăйне хăй тӳрре кăларать арçын. Çулла выльăх-чĕрлĕх çăвĕлех анлă улăхра, ешĕл курăк çинче. Ялта кĕтӳç çуккипе çынсем выльăхсене четретпе пăхаççĕ. Николай Анатольевич вара уйăх ытла кĕтӳ кĕтнĕ.

– 8 сурăхшăн пĕр кун каймалла. Ĕнине те сиктерсе хăвараймăн. Пĕччен çӳреме кансĕр, ял çыннисенчен пулăшу ыйтатăп.

– Хушма хуçалăхра ун чухлĕ выльăх-чĕрлĕхе пĕччен пăхма йывăр мар-и?

– Мĕн пăхмалли пур вĕсене, апат парсан хăйсемех пурăнаççĕ. Уттине те хамах хатĕрлетĕп. Унччен çавапах çулса типĕтеттĕм. Халĕ ал-ура сурнипе ялти çынсем тракторпа е мотоблокпа çулса параççĕ. Выльăх апачĕ çителĕксĕррипе 15 пин тенкĕлĕх утă-улăм, 7 пин тенкĕлĕх тырă туянтăм.

– Хушма хуçалăхран кĕрекен тупăш тăкаксене саплаштарсах тухса каять-тĕр. Хăвăра тыткаламалăх юлать-и?

– Хама валли те укçа юлмасан мĕншĕн нушаланмалла? Акă шутласа пăхар-ха: сурăх – 5, така 3 пин тенкĕ тăрать. Ялта çăматă йăвалакансем çăмне киле килсех илсе каяççĕ. Кăçал ĕнене 22 пин тенкĕпе сутса ятăм. Хĕл кăçаракан вăкăршăн 30 пин тенкĕрен кая ыйтмаççĕ. Сутас пулсан манăн сурăхсем кăна 100 пин тенкĕлĕх пур, – тăрăшсах ăнлантарчĕ хушма хуçалăх хуçи. – Сĕтел çинчен аш-какай таталмасть. Выльăх-чĕрлĕх усранипех хуралтăсем çĕнетрĕм, газ кĕртрĕм. Çитес çул веранда тăвасшăн.

Николай Миронов унччен вырăнти шкулта газ операторĕнче ĕçленĕ, укçи сахал, яваплăхĕ пысăк. Уйăхне 5-6 пин тенкĕ илессишĕн кун кунламалла. Тĕплĕн шухăшланă хыççăн ĕçрен кайнă. Халĕ хăйпе хăй хуçа, никам та хыçалтан хăваласа çӳремест.

Икĕ кил вырăнĕпе хуçаланать Миронов. Кӳршисем хулара ĕçлесе пурăннă май вĕсен пушанса юлнă çурт-йĕрне те пăхса тăрать, пахчипе усă курать. «Ял хĕррине хăрамалла, вут-кăвартан, вăрăсенчен асăрханмалла», – терĕ вăл. Кил хуçипе сăмах çиппине сӳтнĕ хушăра картишĕнче шурă-хура, сарă кушаксем умлă хыçлăнах ăмăртмалла тенĕн чупса иртрĕç.

– Сирĕн пата ял кушакĕсем хăнана килнĕ пулас? – тетĕп эпĕ.

– Хамăнах, кушак кĕтĕвне те тытатăп. Çынсем кушака темле ĕрчетсен те вунвиççĕрен иртмест теççĕ. Çулла вунвиççе çитрĕ, кайран, чăн та, сахалланса юлчĕç, халĕ тăххăр çеç. Çăварламалли тата икĕ кушак пур-ха. Вĕсем пулмасан тӳрех шăшипе йĕкехӳре хуçаланма тытăнаççĕ. Кӳршĕ-аршă пурăнманнипе кăшлакан чĕрчунсем те хăвăрт ĕрчеççĕ.

– Кушак кĕтĕвне мĕнпе тăрантаратăр вара?

– Килте чĕрчун усрасан ăна пăхмаллах. Ятарласах геркулес, макарон, пулă туянатăп, çĕрулми, сĕт паратăп. Вĕсем вара ман пата шăши, йĕкехӳре сĕтĕреççĕ: пахчаран, уй-хиртен... Вĕсемпе каласса чуна йăпататăп.

## Хĕрсемсĕр ял пушă

Николай Миронов пилĕк теçеткене çитсе те çемье çавăрман-ха. Вăл кăна-и, Ямаш ялĕнче ун пек хусах туллиех.

«Çамрăкрах каччăсемпе пенси çулне çитекен хусахсене шутласан çирĕмрен иртеççĕ пулĕ, – терĕç Ямаш ял тăрăхĕнче. – Шел, пирĕн тăрăхра хĕрсем сахал. Шкул пĕтерсенех хулана тухса каяççĕ вĕсем. Ĕç вырăнĕ çукки те пĕтерет». Çамрăксене ялти кичем пурнăç килĕшмест.

– Эпĕ те шкул пĕтерсенех Шупашкара тухса кайнă. Анне чирлесен ăна пăхма ялан лăхах тăван ене пурăнма куçрăм. Шавлă хула пурнăçĕ хыççăн ялти шăплăха хăнăхма йывăрччĕ. Уйрăмах хĕлле тунсăх пусать, хуть ларса макăр. Халĕ çулсем иртнĕ май хăнăхса çитрĕм ĕнтĕ. Ял хусахĕсемпе пуçтăранкаласа илетпĕр çапла хушăран, калаçса чуна йăпататпăр, сыпкаласси те пулкалать. Пирĕн те килте хупăнса ларас килмест.

Амăшĕ пурăннă чухне пĕчченлĕх сисĕнсех кайман. Кăçал вăл çĕре кĕнĕ хыççăн Николай çакна уйрăмах туйса илнĕ. «Çемье кирлех. Юнашар çывăх çын пуррине нимĕн те çитмĕ», – терĕ вăл. Нуша кулач çитернĕ тенешкел амăшĕ халсăрлансан Николай хăех ĕне сума, апат-çимĕç пĕçерме хăнăхнă. Кил-çуртне те типтерлĕ тытма тăрăшать. Çемье çавăрас ĕмĕтне те çухатмасть. Ялта пĕччен пурăнакан хĕрарăмсем пурри те шанăç парать ăна.

– Хулана чун турмасть-и? Халĕ эсир ирĕклĕ, çăмăллăнах куçма пултаратăр. Унта пулас мăшăра тупма та çăмăлрах-и, тен?

– Ялтах аван, ирĕклĕ, уçă сывлăш. Нумаях пулмасть Шупашкара кайса килтĕм. Чылай вăхăт пулманччĕ унта. Ай, тур-тур, хăраса каймалла машина чупать, халăхĕ те кăткă пек. Хĕрпе паллашма-и унта? Хама урăх тĕнчене лекнĕнех туйрăм. Яла çаврăнса çитсен хашах сывласа ятăм. Пулас мăшăра та кунтах тупасчĕ.

**Лариса НИКИТИНА.**
**Сăнӳкерчĕкĕ авторăн.**

# «Аслă ăру пек тăрăшасчĕ»

1-мĕш стр.

Унсăр пуçне 1000 тонна яхăн сутмалăх та юлчĕ», – терĕ Валерий Петрович. Хăй çавăнтах тулă лайăх сутăнни пирки хушса хучĕ.

Кĕрхи культурăсене хуçалăх 310 гектар çине акса хăварнă. Ытларах тыр-пул туса илес тĕллевпе май пур таран çĕнĕ сортсене ĕçе кĕртме тăрăшаççĕ. Сăмахран, кăçал акса хăварнă «Башкирская 10» кĕрхи тулă элита вăрлăх шутланать. Унăн лаптăкĕ 60 гектар йышăнать. Çитес çул урпа вăрлăхне те улăштарма шухăш тытнă ертӳçĕ.

Калаçăва выльăх-чĕрлĕх çине куçарнă май сысна пирки сăмах хускатрăмăр. Пĕр вăхăт аш-какай йӳнелнине пула: «Тупăш парать-и?» – ыйтрăм кăсăкланса. «Паллах, – пулчĕ хурав. – Халĕ аш-какай хакĕ самай ӳсрĕ. Вăл çакнашкал тăрсан сысна шутне 1000 пуçа çитересшĕн. Хальлĕхе 800-е яхăн. Ял халăхĕ те ашлăх сыснана пирĕн патран туянать. Хамăр ĕçченсене йӳнĕ хакпа сутатпăр. Унсăр пуçне вĕсене утă-улăм паратпăр, техникăпа тивĕçтеретпĕр».

Хальхи вăхăтра кунта витесене юсаса çĕнетме тытăннă. Çăвăрлаттармалли пӳлĕмсем йĕркелеççĕ. Ĕçе декабрьте вĕçлесшĕн. Кăçал çавăн пекех ĕне ферминче сĕт пăрăхĕ вырнаçтарнă, пăру витине çĕнетнĕ. Кашни çулах мĕн те пулин туни пурнăçпа тан утнине пĕлтерет.

Майракаллă шултра выльăх шучĕ – 450 яхăн. Вĕсенчен сăванаканни 160 пуç. Ĕне выльăх шутне те çулсеренех ӳстереççĕ. Сăмахран, пĕлтĕр 25 пуç хушăннă пулсан, кăçалхи тăхăр уйăхра – 9. 2010 çулта çанталăк шар кăтартнă вăхăтра та ĕне выльăх шутне чакарман Аслă Елчĕксем. Сĕт хуçалăха самаях тупăш кӳнине каларĕ ертӳçĕ. Халĕ унăн хакĕ ку тăрăхра – 19 тенке яхăн (пĕр литрĕ).

Асăннă хуçалăх кăçалхи тăхăр уйăхра 547 тонна сĕт суса илнĕ, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 114 процент ытларах. Аш-какай туса илесси те ӳснĕ.

Техника туянма та май тупать хуçалăх. Юлашки пилĕк çулта трактор-комбайн çителĕклĕ илнĕ. Ĕçченсен шалăвĕ те вăтамран 12 пин тенкĕпе танлашать. «Малтанхи çулсенче йывăрччĕ, – аса илет иртнине Валерий Петрович. – Ĕçлеме çын çукчĕ, пур ĕçе те алă вăйĕпе пурнăçламаллаччĕ. Ют çĕршыв çыннисене илсе килес патнех çитнĕччĕ. Çитменнине хуçалăхăн парăмĕ те самаяхчĕ». Çак пăтăрмахсене тӳссе иртternĕскер ыранхи куншăн пăшăрханмасть вăл. Мĕншĕн тесен ун çумĕнче шанчăклă çынсем. Паян хуçалăх Олег Патшин, Виталий Долгов трактористсемпе, Николай Горшковпа Николай Падуев, Геннадий Вастулов комбайнерсемпе, Татьяна Печковăсем (иккĕн вĕсем), Ольга Полканова дояркăсемпе, Александра Молоствова, Александра Кузьмина, Зинаида Капсулова сысна пăхакансемпе чăннипех мухтанать. Вăхăтра ĕç укçи илни, хуçалăх вĕсене утă-улăмпа, тĕш тырăпа тивĕçтерни тата ытти ĕçе пурнăçлама пулăшни ял çыннишĕн темрен паха.

Самана урăх çулпа чуптарнă май хăшпĕр хуçалăх малтанхи ятне улăштарчĕ. Асăннă ял хуçалăх кооперативĕ вара халĕ те Ленин ячĕпех хисепленсе тăрать. «Пире ят чăрмантармасть. Хăй вăхăтĕнче миллионер колхоз пулнă вăл. Пирĕн те аслă ăру пек тăрăшса, хавхаланса ĕçлесчĕ. Районта малта пыракан хуçалăхсемпе танлашасчĕ», – пĕтĕмлетрĕ шухăшне Валерий Падуев.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Инструментсем туянма

Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн пуçарăвĕпе Раççейри Культура çулталăкĕнче музыка тата ачасен ӳнер шкулĕсене музыка инструменчĕсем туянма республика бюджетĕнчен 2 млн тенкĕ те 481 пин тенкĕ укçа уйăрма йышăннă. Раççей Культура министерстви те çавăн чухлĕ парать. Иртнĕ эрнере республикăри Министрсен Кабинечĕн ертӳçи Иван Моторин "Чăваш Енĕн пултаруллă ачисем" фестиваль шайĕнче иртнĕ уявра музыка инструменчĕсем туянмашкăн шкулсене сертификатсем панă.

Музыка тата ӳнер шкулĕсем юлашки çирĕм çулта самай пуянланнă: чаплă йышши 100 инструмент туяннă. Вĕсен шутĕнче: фортепьяно, балалайка, тăмра, сĕрме купăс, аккордеон, баян.

Çамрăк ачасем хăйсен пултарулăхне аталантарма пултарччăр тесе чи маттуррисене Чăваш Ен Пуçлăхĕ ятарлă стипендисемпе хавхалантарать. Пултаруллă ачасене хăйсен енчен пулăшакан районсемпе хуласем те пур.

Культурăпа ӳнер тытăмĕнче ачасене хушма пĕлӳ парассипе республикăра паянхи кун 46 шкул ĕçлет.

**Пĕрлĕхре – вăй**

# ССОри туслăх – ĕмĕре

**Кăçал Чăваш Енри студентсен строительство отрячĕсен юхăмĕ йĕркеленнĕренпе 50 çул çитрĕ.**

**1959 çулта çуллахи каникул вăхăтĕнче М.Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн 339 студенчĕ Çурçĕр-Казахстан облаçĕнчи çерем çĕрсене уçма тухса кайнă. Шăпах çакăнтан пуçланнă та ĕнтĕ ССО юхăмĕ.**

Пирĕн республикăра çак отрядсем 1964 çулта йĕркеленнĕ. Чăваш çамрăкĕсем вырăнта çеç мар, тулашра та ĕçленĕ. Сăмахран, эпир, Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем, 1987 çулта Аçтăрхан облаçĕнчи «Фунтовский» совхозра помидор пуçтарнă çĕрте вăй хутăмăр. 35-40 градус шăрăха уйра чăтма питĕ йывăрччĕ. Çапах та плана тултарма тăрăшаттăмăр. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеттĕмĕр. Тулли ешчĕксене пĕр-пĕрин çине купалаттăмăр. Помидор аврипе симĕсленнĕ алла тасатма йывăрччĕ. Çавна май ăна хĕвелпе пиçсе çемçелнĕ помидорпа сăтăраттăмăр. Пушă вăхăтра вара концерт-спектакль кăтартнă. Хăш-пĕр юрă халĕ те асрах:

Помидоры собирать
Нас машина повезет.
Остается только ждать,
Когда обратно привезет.
Гогия-гогия, хачапури-гогия,
Гогия-гогия, хачапури-гогия.

ССОри вăхăта кашни çын ырăпа аса илет. Ара, çак отрядсем яшсемпе хĕрсене туслашма пулăшнă, хул-çурăма çирĕплетнĕ, чун-чĕрене пиçĕхтернĕ. Акă мĕнле аса илеççĕ ĕнерхи студентсем çак хаваслă çулсене:

**Валерий УГАРИН, Шăмăршă районĕнчи Пăчăрлă Пашьел ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Чăваш ял хуçалăх институтĕнче вĕреннĕ вăхăтра 70-мĕш çулсенче студентсен отрядĕнче пулма тӳр килчĕ. Халĕ отряд ятне те астумастăп. Эпир Канаш районĕнчи Çеçпĕл ялĕ çывăхĕнче «Дружба» сысна комплексĕ тунă çĕре хутшăннăччĕ. 24 пин пуç вырнаçмалăх комплексчĕ вăл. ССОра халĕ Патшалăх Канашĕн депутатĕнче тăрăшакан Петр Краснов та пурччĕ. Вăл паянхи пекех хастар та маттурччĕ. Çавăнта унпа çывăх туслашрăмăр. Пирĕн туслăх паян та çирĕп. Пĕр-пĕрне курсан яланах алă паратпăр. Студентсен отрячĕсем пире яланах пĕтĕçтернĕ, туслаштарнă.

ССОри сăнӳкерчĕксене пăхатăп та çамрăклăха аса илетĕп. Ăçтан çавăн чухлĕ вăйхăват тупăннă-ши? Эпир, каччăсем, ĕç вырăнĕнчен пуçласа пурăнакан тĕле çуран чупаттăмăр. 3-4 çухрăма нимĕн те мар парăнтараттăмăр. Пирĕнпе пĕрле отрядра вырăс хĕрĕсем те пурччĕ. Вĕсем ĕçченлĕхпе питех палăрмастчĕç. Астăватăп: пĕр хĕрĕн алли яланах тап-тасаччĕ. Çавăнпа ăна яланах çăмарта ăшалаттараттăмăр.

ССОра 240 тенкĕ ĕçлесе илме пултартăм. Ун чухне çакă пысăк укçаччĕ. Эпĕ аппа патĕнче хваттерте пурăнаттăм. Пĕтĕм укçана ăна патăм. Вăл перекетлĕ тытнă ĕнтĕ. Кирлĕ чухне мана панă.

Эпир тунă сысна комплексĕ халĕ пур е çук – ăна пĕлместĕп. Çав тăрăха питĕ кайса курас, çамрăклăха аса илес килет.

**Ольга КУЗЬМИНА, Вăрнар районĕнчи Çĕрпел ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ:**

– ССОра ирттернĕ çулсене епле манăн? Чи лайăх, чи савăк вăхăтсем вĕсем. Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнче вĕреннĕ чухне икĕ çул ССОра пултăм. Пĕрремĕш курс хыççăн Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕ çывăхĕнче пĕве тунă çĕрте арматурщикре ĕçлерĕмĕр. Пирĕн отряд «Олимп» ятлăччĕ. Командир – Александр Романов.

Эпир, хĕрсем, пĕр эрне апат пĕçереттĕмĕр, пĕр эрне ĕçре вăй хураттăмăр. Эпĕ кухньăра Красноармейски хĕрĕпе, Людăпа, ĕçлеттĕм. Питĕ тирпейлĕччĕ вăл.

1984 çулта иккĕмĕш курс хыççăн Йĕпреçре пулма тӳр килчĕ. «Ваганты» отряд командирĕ Валерий Твороговчĕ. Халĕ вăл Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче студентсене вĕрентет.

Пурăнмалли виçĕ хутлă çурта хăпартрăмăр. Пĕрремĕш хутне эпир купаларăмăр. Çак çурт халĕ те чиперех ларать. Йĕпреçре пулнă май яланах çамрăклăха аса илетĕп. «Ку çурта эпир купаланă», – тесе мăнаçланатăп ун патĕнчен иртнĕ май.

ССОра кăсăклă самант нумай пулнă. Йăла-йĕркене халалласа мероприяти те йĕркеленĕ. Пĕррехинче туй ирттертĕмĕр. Эйпеç ялне хĕр илме кайрăмăр. Унта педагогика институчĕн студенчĕсем стройкăра ĕçлетчĕç. «Çĕнĕ мăшăра» клубра çырăнтартăмăр. Пире курма ял халăхĕ те чылай пынăччĕ.

Япăххи те пулчĕ: кашни кун укçа çухалатчĕ отрядра. Кам вăрланине çулсем иртсен çеç пĕлтĕмĕр. Улатăр каччи кукăр алăллă пулнă. Лайăххи, асра юлмалли нумайрах. ССОра туслашнă юлташ – чи çывăххи. Халĕ те курнăçса калаçатпăр, пĕр-пĕрне салам калатпăр.

Стройкăра тар тăкса ĕçлесе илнĕ укçапа япала туянма Мускава çул тытрăмăр. 400 тенкĕ пысăк укçаччĕ çав ун чухне. Темĕн туянма та çитетчĕ.

**Нина ВАРГАНЕШЕВА, Шупашкарти ятарлă коррекци интернат шкул вĕрентекенĕ:**

– Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çул пуçламăшĕсенче Пăрачкав районĕнчи Кудеиха ялĕнче фермăра вите купаланăччĕ.

100 тенкĕ ытларах ĕçлесе илтĕмĕр. Унпа чаплă пальто туянтăм. Вăл 178 тенкĕ тăратчĕ. Паллах, хамăн шалу çумне пичче хушрĕ кăштах. Пальто çав тери хитречче, шурă çухаллăччĕ. Ун чухне шашкă тирĕнчен çĕленĕ çуха модăна кĕрсе çеç пыратчĕ. Эпĕ çав пальтопа Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхальти вăтам шкула ĕçлеме кайрăм. Ял халăхĕ манран тĕлĕннĕ иккен. «Ку хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ питĕ пуян пулас», – тенĕ.

Çамрăклăха аса илме сăнӳкерчĕксем пур. Унсăр пуçне тантăшсемпе час-часах курса калаçатпăр. Яш чухнехи хаваслă пурнăç яланах куç умĕнче.

**Валентина ПЕТРОВА.**


## Çитес çулхи утăмсем паллă

*Реклама*

Раççей ял хуçалăх банкĕн çитес çулхи тĕллевĕ – бизнес аталанăвне хăвăртлатасси тата агропромышленноç комплексне финанслассине лайăхлатнипе пĕрлех ĕç тухăçлăхне ӳстересси. 2014 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче Мускавра иртнĕ Банк правленийĕн анлă ларăвĕнче çакна палăртнă та.

Санкцие тата инвестици хастарлăхĕ чакнине пăхмасăрах банк кăтартусене лайăхлатса пырать. Кăçалхи октябрь тĕлне Раççей ял хуçалăх банкĕн кредит портфелĕ 1,42 трлн тенкĕпе танлашнă (çулталăк пуçланнăранпа 11,4 процент хăпарнă). Çав шутра предприяти-организацисен кредит портфелĕ – 1,16 трлн тенке (12,8 процент ӳснĕ), уйрăм çынсен 261 млрд тенке (5,5 процент ӳснĕ) çитнĕ.

Раççей ял хуçалăх банкĕ отрасль диверсификацийĕ шучĕпе бизнесăн мĕнпур сегменчĕсене ӳстернипе, кредит теветкелĕхне чакарнипе, çăмăллăхпа тивĕçтерессине тата сутассине сарнипе аталанса пырать. Банкăн тĕп тĕллевĕ – ял хуçалăх отраслне аталантарасси. Унăн мĕнпур кредитсен 50 процентĕ АПКна аталантарма каять. «Раççей ял хуçалăх банкĕ патшалăх агропромышленноçа çĕклессипе тата ют çĕршыв апатçимĕçне вырăнти таварпа улăштарассине хăвăртлатассипе палăртнă тĕллевĕсене те пурнăçлать. 2008 çултан пуçласа 2014 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕчен ял хуçалăхне аталантарма 2,63 трлн тенкĕлĕх кредит уйăрнă. Банк отрасле ял хуçалăх продукцине туса илессипе, тирпейлессипе, упрассипе, сутассипе йышăннă проектсене пурнăçа кĕртме укçа енчен пулăшассине ӳстерме палăртать, – тенĕ Раççей ял хуçалăх банкĕн Правлени председателĕ Дмитрий Патрушев.

*РФ Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*


## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!**




| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ |
|---|---|---|
| 54838 | Хресчен сасси | 376-62 |
| 43887 | Хресчен сасси-Кил | 184-08 |

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ

### ШАЛУ КУНĔ

Полицие пĕр хĕрарăм чупса кĕнĕ.

– Упăшка çухалчĕ! Тупса парăр! – пĕлтернĕ вăл йĕре-йĕре.

– Ĕç мĕнле пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парăр. Хăçан çухалчĕ упăшкăр?

– Икĕ эрне киле таврăнмасть ĕнтĕ.

– Мĕншĕн кун çинчен халь тин пĕлтеретĕн? – ыйтать йĕркелĕх хуралçи.

– Унăн паян шалу кунĕ-çке.

### АРÇЫН ĔÇĔ

Упăшки каç пулттипе киле таврăнать.

– Çăкăр илтĕн-и? – ыйтать арăмĕ.

– Арçын ĕçĕ мар вăл, – таврăрать лешĕ.

– Эппин, арçын ĕçне ту, – халатне хывма пикенет арăмĕ.

– Тăхта-ха, шӳтлеме те юрамасть-им, – хыпăнса ӳкет арçын. – Сумккă парха, тата мĕн туянмаллине кала...

### ПУÇЛĂХА ЮНАНИ

– Ну, паян пуçлăха хытах лектертĕм, – мухтанать пĕри юлташĕ умĕнче.

– Мĕн турăн вара? – кăсăкланать тепри.

– Ăна сăмсаран чышкăпа тивертрĕм.

– Маттур! Сана мĕн терĕ пуçлăх. Хытă тарăхрĕ пуль...

– Çук, журналиста интервью паратчĕ вăл. Телевизорпа.

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Туntiкун, ноябрĕн 24-мĕшĕ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытларикун, ноябрĕн 25-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
20.30 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юнкун, ноябрĕн 26-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
20.45 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерникун, ноябрĕн 27-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
20.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрнекун, ноябрĕн 28-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
20.45 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăматкун, ноябрĕн 29-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «МУСКАВ КУÇÇУЛЕ ĔНЕНМЕСТ» ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (16+)
17.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
17.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
17.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
18.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
18.30 «ДЕРЕВО ДРУЖБЫ» (12+)
19.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
19.30 «АВАН-И» (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)

**Вырсарникун, ноябрĕн 30-мĕшĕ**

9.00 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
9.15 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
9.30 «10 НЕГР АЧИ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
17.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
18.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
18.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
19.00 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
19.30 «ПЕХИЛ» (12+)
20.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
20.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Ноябрь, 19 – юнкун | Ноябрь, 20 – кĕçнерникун | Ноябрь, 21 – эрнекун | Ноябрь, 22 – шăматкун | Ноябрь, 23 – вырсарникун | Ноябрь, 24 – тунтикун | Ноябрь, 25 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.36 | 7.38 | 7.39 | 7.41 | 7.43 | 7.45 | 7.47 |
| | анать | 15.36 | 15.35 | 15.33 | 15.32 | 15.31 | 15.29 | 15.28 |
| Кун тăршшĕ | | 8.00 | 7.57 | 7.54 | 7.51 | 7.48 | 7.44 | 7.41 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (15.31) | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 30-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун |
| | | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче |

### 2014 – КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Иксĕлми çăлкуç



**Культура çулталăкĕ Çĕрпӳ районĕнчи Ямаш ял тăрăхĕшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ иртнине каларĕ Юрий Тимофеев ертӳçĕ. Нумаях пулмасть асăннă ял тăрăхне кĕрекен Пысăк Чăрăшра культурăпа библиотека аталанăвĕн центрне уçрĕç. Кивĕ çурта юсаса çĕнетнĕ хыççăн халăх каллех унта пухăнма тытăнчĕ.**

## «Туслăх кăшăлĕ» туслăха çирĕплетет

Савăнăçлă уява хăна-вĕрле чылай пуçтарăннă. Пурте парнесемпе килнĕ. Сăмахран, район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов çĕнĕ клуба купăс парнеленĕ. ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова вара – 400 пин тенкĕлĕх свидетельство хутне.

Çулталăк пуçламăшĕнче Ямашра клуб уçнă. Ялти шкул çуртĕнче пушă пӳлĕмсем пулнă. Вĕсене пĕрлештерсе культура çурчĕ йĕркелеме палăртнă. 2006 çулта ял клубĕ çунса кĕлленнĕ хыççăн уявсем ирттерме, çамрăксене пухăнма май пулман. Çавна май ял-йыш ĕçе тытăннă. Икĕ эрнере ăна хатĕрлесе çитернĕ. 92 вырăнлă клубра паян таса та çутă. Культура çулталăкне шăпах çакăнта уçнă Ямашсем. Ăна çак ялта çуралса ӳснĕ Александр Сергеев композитора халалланă. Пурăннă пулсан кăçал вăл 80 çул тултарнă пулĕччĕ.

Кунта ял тăрăхĕ шайĕнче «Туслăх кăшăлĕ» фестиваль йĕркеленĕ. Унта вунă районтан 12 фольклор ушкăнĕ хутшăннă. Пурте Александр Сергеевич хайланă юрăсене шăрантарнă. Халăх кăмăллакан юрăсем çырнă вăл: «Лар, аннеçĕм, юнашар», «Ма хитре-ши Шупашкар урамĕ?», «Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем» тата ыт. те.

«Эпир тĕрлĕ районти фольклор ушкăнĕсемпе çыхăну тытатпăр. Вĕсем патĕнче хăнара пулнă хыççăн хамăр пата чĕнес терĕмĕр. Çапла вара фестиваль йĕркелес шухăш çуралчĕ. Культура çулталăкне пĕтĕмлетме те декабрь уйăхĕнче вĕсене кунтах чĕнесшĕн», – шухăшне уçăмлатрĕ Юрий Григорьевич.

Ял тăрăхĕ шайĕнче фестиваль-конкурс йĕркелесси çăмăл мар. Юрра-ташша кăмăллакан ертӳçĕ фестиваль иртерессишĕн хыпса çуннине туйрăм. Вăл хăй те «Ямаш» ушкăна çӳренине пĕлтĕм. Мăшăрĕ Эльвира Алексеевна вара ушкăн ертӳçи иккен.

## Такăр çул сана, «Ямаш»!

Александр Сергеев хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор шутланать. Вăл ялсене концертсемпе час-часах çӳренине калаççĕ ĕçтешĕсем. Унсăр пуçне тăван ялĕнче хор йĕркелеме ĕмĕтленнĕ. Анчах вăл пурнăçлайăман. Шăпах унăн шухăшне Эльвира Тимофеева малалла тăснă. Виçĕ çул каярах кунта «Ямаш» ушкăн йĕркеленнĕ. Кĕске вăхăтрах артистсем районти ялсенче çеç мар, Тутар Республикинче, Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнче пулнă. Наци радиовĕ ирттерекен «Иксĕлми çăлкуç» конкурса хутшăннă. Мари Республикинчи Утар ялĕнчи фольклор ушкăнĕпе тупăшнă. Шел, йăхташсене выляса янă. Апла пулсан та кӳренмен, çывăх паллашас тĕллевпе вĕсем патне çула тухнă. Халĕ хăйсене хăнана чĕнеççĕ.

«Вăл çук, ку çук» тесе макăрмаççĕ Ямашсем. Хăйсен укçи-тенкипех сцена тумтирĕ çĕлеттереççĕ. Халĕ кашнийĕн пилĕк тĕрлĕ кĕпе. Çĕвĕçсем те ялтах пурăнаççĕ. Татьяна Васильевăпа Галина Лукина ку енĕпе питĕ пултаруллă. Ушкăна ача-пăчана явăçтарма пуçлани те ырă пулăм.

Мĕн çинчен юрлать-ха «Ямаш» ушкăн? Ытларах вырăнти юрра-кĕвве шăрантарать. Ĕлĕкхи юрăсене «чĕртме» тăрăшаççĕ артистсем. Çавна май аслă ăруран çырса илеççĕ.

Алă çавăрмалăх укçа-тенкĕ ĕçлесе илес тĕллевпе туйсене, юбилейсене çӳреççĕ, халăха юрă-ташăпа савăнтараççĕ.

«Мĕншĕн маларах йĕркелемен-ши çак ушкăна? – тет Галина Ефимова пуçаруçă. – Хальччен нумай ĕç пурнăçлама ĕлкĕреттĕмĕр. Унсăр пуçне хамăр ватăлса пыни пăшăрхантарать».

Пулни-иртнишĕн кулянма кирлĕ мар. Малашнехи ĕмĕтсем пурнăçланччăр. Кĕçех «халăх» ятне илме вăхăт çитет. Çавăн пекех республика тулашне çитсе курма тĕллев лартнă. Эппин, такăр çул сана, «Ямаш»!

**Валентина ПЕТРОВА.**

### МĔН КАЛАÇТАРАТЬ?

# Ырă пуçарăвăн вĕçĕ пулĕ-ши?

**Мĕнле пурăнать-ха паян ял клубĕ? Кашнийĕ хăйне майлă ĕçлесе илме тăрăшать. Ара, вĕсене те план параççĕ-çке. Унта-кунта тухса çӳреме транспорт çук, ял-йыш культура çурчĕпе кăсăкланма пăрахнă – плана вара тултармалла. Мĕнле майпа?**



## Лайăххипе япăххи юнашар

«Çамрăксем дискотекăна çӳремеççĕ, – терĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьскинчи культурăпа информаци тата туризм центрĕн пуçлăхĕ Антонина Вотякова. – Шапашран ĕçлесе килеççĕ те хулана каçхи барсене каяççĕ. Ку тĕлĕшпе халĕ кăткăс мар, кашни килте çăмăл машина пур. Барсенче вара сăра-эрех çителĕклĕ. Клуба хаяр шĕвекпе кĕме чарнă. Çитменнине эпир 23 сехетчен çеç ĕçлетпĕр. Дискотека хакне 40 тенкĕ тунă. Тӳлевлĕ мар, тӳлевсĕр те килмеççĕ ташлама».

Ял çынни концерт-спектакле те çӳремест ку тăрăхра. Шупашкартан пыракан артистсен концерчĕсене те çур зал çеç пуçтарăнать. Вырăнти концертсем пирки калама та кирлĕ мар. Унта-кунта тухса çӳреме автобус та çук. Антонина Ивановна калană тăрăх – маларах шкул автобусĕпе усă курнă вĕсем. Анчах юлашки вăхăтра унпа çӳреме чарнă. «Уйрăм çынсене ытларах тӳлемелле. Концерт лартса пухнă укçа çул çинех тухса каять», – малалла сăмахларĕ вăл.

Паллах, япăххи çеç мар, лайăххи те пурах. Акă кăçал вĕсем «Ялти культура çурчĕсене юсаса çĕнетес» программăна хутшăнса 400 пин тенкĕлĕх грант çĕнсе илнĕ. Кĕçех сцена тумтирĕ, çутăпа сасă аппаратури, аудио тата видеотехника килмелле. Центрта тĕрлĕ кружокпа ансамбльсем те ĕçлеççĕ. Район, республика мероприятийĕсене хутшăнса дипломсене тивĕçеççĕ.

«Ял ватăлса пырать. Çамрăксем ют çĕре ĕçleме çӳреççĕ. Вăй питти çынсем те хуланалла туртăнаççĕ. Каçхине, ĕç хыççăн, кружоксене, ансамбльсене çӳрес текен сахал. Ял-йыша хавхалантарас тĕлĕшпе пĕрикĕ хутчен 80-мĕш çулсенчи ташă каçĕсене те йĕркелесе пăхрăмăр. Малтанах чылайăн пуçтарăнчĕç, каярахпа килми пулчĕç», – пăшăрханса пĕлтерчĕ директор. Республикăри хăш-пĕр культура çурчĕн ĕçченĕсен юбилейсене, туйсене çӳрене каларăм эпĕ. «Октябрьски ялĕнчи халăх хăйне чаплăрах туять çав. Тамада тытаççĕ, пур уява та кафере ирттереççĕ», – пулчĕ хурав. Малашне фитнес клуб уçма палăртнине пĕлтерчĕ. Унта çӳрес текен те пур иккен. Анчах ертӳçи хальлĕхе ерĕçмест.

## Кĕтсе илĕпĕр-и?

Октярьскинчи культурăпа информаци тата туризм центрне çак тăрăхри икĕ клубпа икĕ вулавăш кĕрет. Малти Пукашри клуб кивĕ. Çавна май ял тăрăхĕ кунта ниме шучĕпе культура çурчĕ хăпартма шут тытнă. Иртнĕ çул унăн кăшкарне çĕкленĕ. Анатолий Мясников пуçлăх вырăнти спонсорсем Геннадий Андреевпа Андрей Степанов пулăшнине палăртрĕ. Пулăшас текен малтан чылайăн пулнă иккен, ĕç-пуç йĕркеленсен хăшĕн-пĕрин нухрата тӳрех кăларса парас килмен курăнать. Вырăнти бюджет укçитенкипе хăпарнă клуб. Халĕ вара ĕç чарăнса ларнă. Струпилсене те хăпартнă пулнă. Çил-тăманпа ишĕлсе аннă вĕсем. Ял-йыш палăртнă тăрăх – халăх та пырса ĕçленĕ.

Çĕнĕ клуба курас тĕллевпе Малти Пукаша çул тытрăмăр. Малтанах клуб ертӳçипе Екатерина Кирилловăпа телефонпа çыхăнтăм. Хăй манпа курнăçма ерĕçменнине, унта рабочисем ĕçленине каларĕ. Çитрĕм те тĕлĕнтĕм: кунта ĕнер те, паян та, виçĕм кун та никам та ĕçлемен. Çулталăк хушши нимĕн те туман. Ял çынни калашле «пуçланă ĕçе вĕçне çитерĕç-ши?» «Кам валли тăваççĕ ăна. Ялта кинемейсемпе мучисем çеç юлчĕç вĕт» текен те тупăнчĕ. Мĕншĕн суйрĕ-ха мана Екатерина? Килти çӳп-çапа урама кăларас темерĕ курăнать. Мана уйăх çинчен персе аннăскер тесе шухăшларĕ-ши?

Республикăри пĕр кăларăмра кăçал Малти Пукашра клуб уçăлни çинчен материал пичетленнĕ иккен. Тăрăсăр, кантăксăр, алăксăр, урайсăр клуба пурте кĕрсе тухма пултараççĕ. Вăл, чăн та, уçă.

Çитес çулхи январь уйăхĕнчен ял клубĕсене каллех районти культура çурчĕн хӳттине параççĕ. Урăхла каласан, ĕлĕкхи ларутăру каялла çаврăнать, хăй хальлĕн ĕçлекен пĕр организаци пулать. Çавна май Малти Пукаш клубĕн шăпи урăх алла куçать. Октябрьски ял тăрăхне ун чухне кирлĕ пулĕши вăл? Нимелле пуçланă ĕç вуçех путланмĕ-ши?

**Валентина МАКСИМОВА.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕ.**


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

*ПРОДАЮ СУТАТĂП*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**618. Косилки,** грабли, **фрезы,** опрыскиватели, **погрузчики** на МТЗ. **ДОСТАВКА!** Тел.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОРШĂН – А.Г. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4421
Тираж 4323

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.